чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă 1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă 1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

44 /26450/ № Юн кун, 2014, пуш (март), 12 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

## Ветерансемпе канашланă

***Пуш уйăхĕн 7-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Çĕнĕ Шупашкар хулин Историпе ӳнер музей комплексĕнче вăрçă тата ĕç, хĕç-пăшаллă вăйсен тата право йĕркине сыхлакан органсен Çĕнĕ Шупашкарти ветеранĕсен канашĕн членĕсемпе тĕл пулнă. Тĕл пулăва республикăн Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕ Алла Самойлова, хула ертӳлĕхĕ хутшăннă.***

Калаçу кăмăллă лару-тăрура иртнĕ. Ветерансем республикăри тата çĕр-шыври социаллă пурнăçпа политикăри йĕркеллĕ лару-тăрăва тытса пырасси, çамрăксене çарпа патриотизм воспитанийĕ парассине вăйлатасси, шырав ушкăнĕсен ĕçне регламентацилесси çинчен саккун йышăнмалли, ветерансен канашĕсен ĕçне патшалăх енчен пулăшмалли çинчен каланă. Управляющи компанисен ĕç пахалăхне, яваплăхне ӳстерес, ветерансене транспортпа, эмелсемпе тивĕçтерессине лайăхлатас ыйтусене хускатнă.

Михаил Игнатьев аслă ăрури çынсен ыйтăвĕсене тĕрĕслесе тăма шантарнă, ветерансен организацийĕсене патшалăх гранчĕсене илмелли конкурссене хастар хутшăнма сĕннĕ. Республика Пуçлăхĕ хула ертӳлĕхне ветерансен сĕнĕвĕсене ытларах итлеме, хулари çивĕч ыйтусене татса панă чухне вĕсемпе çыхăну тытма канаш панă. Кăçалхи çĕртме уйăхĕнче республикăра Раççейри пенсионерсен пĕрремĕш Спартакиади иртет, Михаил Васильевич Çĕнĕ Шупашкарсене унта хастар хутшăнма чĕнсе каланă.

Çĕнĕ Шупашкар хулинчи ветерансем Чăваш Ен Пуçлăхне хăйсемпе тĕл пулса тĕрлĕ ыйтăва сӳтсе явма май тупнăшăн тав тунă.

■ **А.ЛЬВОВА**

## Саламлатăп

**Наркотĕрĕслев органĕсен хисеплĕ ĕçченĕсем!**
**Сире професси уявĕпе саламлатăп!**

Эсир наркотик хатĕрĕсен саккунсăр çаврăнăшне хирĕç пыракан кĕрешӳре малти ретре тăратăр.

Тĕнчере кашни çулах наркотиксен çĕнĕ тĕсĕсем вăй илеççĕ, вĕсем тата та анлăрах сарăлаççĕ, халăх хушшинче наркотиксемпе усă куракансен йышĕ ӳсет. Сирĕн ĕçри ăсталăхăрпа яваплăх, тивĕçе парăнни тата принциплă пулни обществăна социаллă çав синкертен хӳтĕлеме пулăшаççĕ.

Наркотик хатĕрĕсемпе усă курса тунипе тата вĕсене сарнипе çыхăннă преступленисенчен асăрханасси, киревсĕр çав йăла уйрăмах çул çитмен çамрăксен хушшинче вăй илесрен сыхланасси патшалăх политикин тĕп çул-йĕрĕсенчен пĕри шутланать. Пирĕн пĕрлехи вăйпа халăх наркотик хатĕрĕсене сивлесе йышăнассине йăлана кĕртмелле, çамрăксене спортпа туслаштарма тăрăшмалла тата сывă пурнăç йĕркине сармалла.

Федерацин наркотиксен çаврăнăшне тĕрĕслесе тăракан службин Чăваш Республикинчи управленине туса хунăранпа иртнĕ 11 çул хушшинче эсир компетентлă, пысăк ăсталăхлă та ĕçчен, яваплă специалистсем пулнине, ĕçре пухнă пуян опытăрпа пĕлсе усă курнине витĕмлĕн çирĕплетсе патăр.

Эсир ăнăçлă ĕçленĕ май Чăваш Енри наркотиксемпе çыхăннă лару-тăру акă чылай çул çирĕп тата тĕрĕслесе тăракан шайра шутланать.

Наркотĕрĕслев ĕçченĕсене тата ветеранĕсене общество ырлăхĕшĕн хăйсене шеллемесĕр ĕçленĕшĕн чунтан тав тăватăп.

Сире ырлăх-сывлăх, телей тата мĕн пур лайăххине сунатăп!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**

## Янукович журналистсен умĕнче тухса калаçнă

***Ĕнер Дон çинчи Ростовра Украинăн влаçран пăрнă президенчĕ Виктор Янукович журналистсен умĕнче тухса калаçнă.***

Пресс-конференци «Вертол Экспо» курав центрĕн «Аметист» залĕнче иртнĕ. Унта 100 яхăн журналист хутшăннă.

Нарăсăн 28-мĕшĕнче иртнĕ пĕрремĕш пресс-конференцире Янукович «йĕркесĕрлĕхе чарма пултарайманшăн» Украина халăхĕнчен каçару ыйтнă, çавăн пекех хăйне Украинăн саккунлă президенчĕ тесе пĕлтернĕ. Çавăн пекех вăл тухса тăнă лару-тăрăва йĕркелесе яма пĕтĕм наци референдумĕ ирттерме чĕнсе каланă.

Каярах Раççей Федерацийĕн Пĕрлешнĕ Нацисен Пĕрлĕхĕ çумĕнчи яланхи председателĕ Виталий Чуркин ПНПн Хăрушсăрлăх канашĕн членĕсене Янукович Раççей Президентне Владимир Путина янă çырупа паллаштарнă. Унта вăл вырăсла калаçакан халăха тата çĕр-шыври тăнăçлăха хӳтĕлеме Украинăна Раççей çарĕсене кĕртме ыйтать. Документа пуш уйăхĕн 1-мĕшĕнче алă пуснă.

Пĕрремĕш пресс-конференцире Янукович «Крымăн Украина йышĕнче юлмалла» тенĕ. Пуш уйăхĕн 6-мĕшĕнче Крым парламенчĕ Путина республикăна Раççей Федерацийĕн йышне илме ыйтнă. Пушăн 16-мĕшĕнче Крымра Раççейпе пĕрлешесси çинчен референдум иртет. Киев çак мероприяти саккунлăхне йышăнмасть.

**Lenta.ru**

*Субсиди*

# Патшалăх хресчене еплерех пулăшĕ?



***Республикăн агропромышленноç комплексне пĕлтĕр хыснаран 2,45 млрд тенкĕ – виçĕм çулхинчен 19% нумайрах – уйăрнă. Кĕмĕл кăçал та чылай парĕç. Уйрăммăн илсен ăратлă выльăх, вăкăр вăрлăхĕ, чĕпĕ кăлармалли çăмарта, талăкри чăх чĕппи туянма, ял хуçалăх организацийĕсен сĕт лайăх антаракан ĕнисене, ятарлă хуçалăхсен ăратлă ама выльăхне тăрантма кăçал та куçарĕç.***

2014 çулта субсиди памалли йĕркене çавнашкал улшăну кĕртнĕ. Ăратлă выльăх ĕрчетекен ятарлă хуçалăхсем мăйракаллă шултра ама выльăха, вăл шутра ашлăх ăратлă ама выльăха пăхма иртнĕ çул кашни условнăй ĕне пуçне федераци хыснинчен – 4200 тенкĕ, республика бюджетĕнчен çак укçан 5% чухлĕ илнĕ. Вĕсене тĕревлеме кăçал пĕрремĕшĕнчен – 3615 тенкĕ, иккĕмĕшĕнчен ку кĕмĕлĕн 5,8% чухлĕ ярĕç.

Ăратлă выльăх ĕрчетекен ятарлă хуçалăхсене ăратлă ама выльăха /мăйракаллă шултра ама выльăхсăр пуçне/ çитерме федераци хыснинчен укçа кашни условнăй выльăх пуçне – 3520 тенкĕ, республика бюджетĕнчен çак нухратăн 5% чухлĕ тивнĕ. 2014 çулта федерацирен – 3030 тенкĕ, республика хыснинчен ку укçан 5,8% чухлĕ парĕç.

Ăратлă выльăх ĕрчетекен ятарлă хуçалăхсене сĕт аван антаракан ĕнесен, самăртма хупакан выльăх шутне ӳстерме 16 уйăхран иртнĕ вăкăрсене – çулталăкра пĕрре вĕсен тăхăмĕн пахалăхне палăртнисене тата палăртаканнисене – усрама Раççей бюджетĕнчен кашни условнăй выльăх пуçне – 105248 тенкĕ, Чăваш Ен хыснинчен çав кĕмĕлтен 5% чухлĕ килнĕ. Кăçал пĕрремĕшĕнчен – 150 пин тенкĕ, иккĕмĕшĕнчен ку нухратăн 5,8% чухлĕ уйăрма пăхнă.

Хальхи вăхăтра тирпейлекен предприятисем сĕтрен юр-вар сахалрах хатĕрлеççĕ. Чăвашстатран пĕлтернĕ тăрăх – иртнĕ çул ăна сĕт виçипе шутласан 141,5 пин тонна – 2012 çулхинчен 17,6% сахалрах – туса кăларнă. Çакна шута илсе пĕлтĕр сунă сĕтĕн 80% кая мар сутсан кăна пысăк шанăç паракан ĕнесене пăхмашкăн субсиди уйăрма сĕнеççĕ.

РФ Правительстви кăçалхи кăрлачăн 14-мĕшĕнче 21-мĕш йышăну кăларчĕ. Унпа килĕшӳллĕн ял хуçалăх продукцийĕ туса илекенсем сутнă кашни литр сĕт тăкакĕн пĕр пайне федераци хыснинчен килекен укçаран саплаштарма субсиди уйăрмалли тата валеçмелли йĕркене улшăну кĕртнĕ. ЧР Ял хуçалăх министерстви çав документа тĕпе хурса ЧР Министрсен Кабинечĕн 2013 çулхи пуш уйăхĕн 18-мĕшĕнчи «Ял хуçалăх таварĕ туса илекенсем /килти хуçалăхсемсĕр пуçне/ сутнă кашни литр сĕт тăкакĕн пĕр пайне саплаштарма Чăваш Республикин хыснинчен субсиди памалли йĕркене çирĕплетесси çинчен» 96-мĕш йышăнăвне улшăнусем кĕртме хатĕрлерĕ. Кăçал сĕтшĕн субсиди 2013 çулта кашни 100 ĕнерен 70 пăруран сахал мар илнĕ, ĕне кĕтĕвне кашни квартал пуçламăшĕ тĕлне иртнĕ виçĕ уйăхринчен пĕр пуç та чакармасан тата 2014 çулта кашни уйăхра иртнĕ çулхи тапхăрти чухлех продукци туса илсен çеç параççĕ. 2013 çулта кашни ĕнерен вăтамран 7 пин литр сĕт сунă хуçалăхра кăçал сăвăма 5% ытла мар чакарсан кăна субсиди илĕç.

Минерал удобренийĕшĕн, ӳсен-тăрана хӳтĕлемелли хими им-çамĕшĕн, çăмăллăхлă йĕркепе уйăрнă топливăшăн тата элита вăрлăхăн пĕр пайĕшĕн тивнĕ субсидие 2013 çултан ӳсен-тăран çитĕнтерме уйăракан пулăшупа улăштарчĕç.

Ял хуçалăх культурисем туса илекенсен тăкакĕн пĕр пайне федераци бюджетĕнчен уйăракан субсидирен саплаштарасси кашни гектар акнă культура пуçне отчетлă тапхăрти федераци статистикин 4-сх, 1-фермер /29-сх, 2-фермер/ формисемпе килĕшӳллĕн пулса пырĕ. Хуçалăхсен субсидие тивĕçес тесен кăçал пĕлтĕрхинчен сахал мар акма-лартма шантармалла.

Иртнĕ çул сухаламан-акман, çĕр ĕçне кăçал çеç пикеннĕ организацисене ӳсен-тăранран продукци илсе курнă тăкакăн пĕр пайне 2014 çулта акнă-лартнă кашни гектар лаптăка тата акмалли-лартмалли плана тĕпе хурса саплаштарĕç. Культурăсен пĕлтĕрхи лаптăкне мĕн чухлĕ чакарнине кура субсиди пĕчĕкленет.

РФ Правительстви 2012 çулта выльăх-чĕрлĕхе страхламалли çĕнĕ йĕрке çирĕплетрĕ. Страхлакан организаципе хуçалăх хушшинче çирĕплетнĕ договорпа килĕшӳллĕн ял хуçалăх таварĕ туса илекенсем хывакан страховка премийĕн тăкакĕн пĕр пайне саплаштарма унăн 50% чухлĕ субсиди уйăрĕç.

●➡ 2 стр.

# Укçа – юбилейсене хатĕрленме

***Пуш уйăхĕн 11-мĕшĕнче Мускавра Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Шупашкар хулине никĕсленĕренпе – 550, Чăваш автономи облаçне туса хунăранпа 100 çул çитнине уявлама хатĕрленес енĕпе ĕçлекен йĕркелӳ комитечĕн черетлĕ ларăвне хутшăннă.***

Ларăва уçнă май Раççей культура министрĕн çумĕ Алла Манилова юбилейсене уявлама хатĕрленессипе çыхăннă ĕç палăртнă йĕркепе пурнăçланса пыни çинчен каланă. «Этнос Чăваш Енĕ» инвестици проектне пысăка хурса хакланă, çавăн пекех республикăн сывлăх сыхлавĕн тытăмне аталантарассипе, халăха физкультурăпа тата спортпа туслаштарассипе çыхăннă ăнăçăвĕсене палăртнă.

Сăмах илнĕ май Чăваш Ен Пуçлăхĕ Раççей Президенчĕ Владимир Путин алă пуснă «Шупашкар хулине никĕсленĕренпе – 550, Чăваш автономи облаçне туса хунăранпа 100 çул çитнине уявласси çинчен» указ Чăваш Енре пурăнакансемшĕн пысăк пĕлтерĕшли, вăл Раççейри халăхсен туслăхне çирĕплетме пулăшни çинчен каланă. «Чăваш Ен – Раççей Федерацийĕн авалхи историллĕ, пуян культурăллă тата йăла-йĕркеллĕ хăйне евĕрлĕ регионĕ. Пирĕн республика Раççей историйĕпе тачă çыхăннă, нумай ĕмĕре тăсăлакан çак çыхăну паян та татăлмасть», – тенĕ М.Игнатьев.

Республика Пуçлăхĕ йĕркелӳ комитечĕн членĕсене Культура çулталăкне халалланă пысăк мероприятие чĕннĕ. Вăл Чăваш Енре кăçалхи çĕртме уйăхĕнче иртет, унта федерацин Атăлçи округĕнчи мĕн пур регион хутшăнать. Çавăн пекех халăх пултарулăхĕн «Раççей çăл куçĕсем» фестивальне килме йыхравланă, йăлана кĕнĕскер Республика кунне уявланă вăхăтра пулĕ.

«Культура» ăнлав пирĕншĕн искусствăпа кăна чикĕленмест. Вăл чылай анлăрах, унта çынсен хутшăнăвĕсен мĕн пур сфери, кăмăл-сипет нормисене уясси, шухăш-кăмăл тасалăхĕ, кашни çыннăн чун экологийĕ те кĕреççĕ. Республикăн тĕп пуянлăхĕ – ырă, ĕçчен, яваплăха туякан, талантлă çынсем. Яланах çапла пулнă, шансах тăратăп, малашне те çаплах пулĕ. Пирĕн тĕллев – çыншăн тăрăшса экономикăна, культурăна, социаллă сферăна аталантарасси, республикăри демографи лару-тăрăвне лайăхлатасси, Чăваш Ен çыннисем социаллă пурнăç енĕпе хăйсене лайăхрах туяссишĕн тăрăшасси», – палăртнă Чăваш Ен Пуçлăхĕ.

Ларура çавăн пекех Шупашкар пуçлăхĕ Леонид Черкесов та сăмах илнĕ. Вăл юбилейсемпе çыхăннă тĕп мероприятисен планĕсене пурнăçласси çинчен каласа панă. Çав шутра – культурăпа çут ĕç мероприятийĕсем, хулана хăтлăрах тăвасси, юсав, реставраци ĕçĕсем тата ыт. те. 2013 çулта историпе культура еткерне упраса хăварас, вĕсемпе усă курас тĕллевлĕ мероприятисен, юсав, реставраци ĕçĕсен, капиталлă строительство объекчĕсен реконструкцийĕн пуçламăшĕ валли çеç укçа уйăрнине палăртнă. Çак тĕллевсемпе мĕн пур çăл куçран 363,8 млн тенкĕ уйăрма палăртнă. Чăннипе вара çулталăк кăтартăвĕсем тăрăх мĕн пур çăл куçран уйăрнă 454,5 млн тенкĕпе /планăн 124,9%/ усă курнă. Çав шутра федераци бюджечĕн укçи – 27,7 млн /66,3%/, республикăн пĕрлештернĕ бюджечĕн – 294,7 млн /2,7 хут нумайрах/, бюджет тулашĕнчи çăл куçсенчен – 132,1 млн тенкĕ /61,4%/.

Тĕп мероприятисен планĕсемпе килĕшӳллĕн 2015-2017 çулсенче 32 объект реконструкцине пуçламалла е малалла тăсмалла. Çак тĕллевпе çирĕплетнĕ плансемпе килĕшӳллĕн федераци бюджетĕнчен уйăракан укçан пĕтĕмĕшле виçи 5554,6 млн тенкĕпе танлашмалла. Çав шутра 2015 çулта – 552 млн /10%/, 2016 çулта – 2194,2 млн /40%/, 2017 çулта – 2808,4 млн тенкĕ /50%/. Çак объектсем валли республика бюджетĕнчен те укçа уйăрĕç.

Правительство йышăнăвĕпе Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен паллă кунĕсене федераци шайĕнче уявлама укçа уйăрмалли виçене палăртмалли методикăна çирĕплетнĕ. Анчах паянхи кун тĕлне ку енĕпе уçăмлăх çук. М.Игнатьев палăртнă тăрăх – Правительствăра иртнĕ ĕçлĕ тĕл пулусем, çав шутра Дмитрий Козак вице-премьерпа курнăçни уяв мероприятийĕсене ирттерме федераци бюжетĕнче укçа-тенке тĕллевлĕ субсидисен шучĕпе уйрăм йĕркепе пăхса хăвармаллине çирĕплетеççĕ. Паянхи кун тĕлне Раççей Регионсен аталанăвĕн министерстви уяв мероприятийĕсем валли федераци бюджетĕнчен РФ субъекчĕсене субсиди шучĕпе укçа памалли методикăна кĕртмелли улшăнусене хатĕрленĕ, вĕсене РФ Правительствине тишкерме панă.

Йĕркелӳ комитечĕн членĕсем Чăваш Республикин бюджет заявкисене ырламашкăн йышăннă. Регионсен аталанăвĕн, Культура, Спорт, Сывлăх сыхлавĕн, Вĕренӳ министерствисен, Росавтодорăн Раççей Финминĕпе пĕрле 2015 çулта тата 2016, 2017 çулсенчи планпа пăхнă тапхăрта федераци бюджетĕнчен капиталлă строительство объекчĕсем валли пĕрле укçа уйăрассине тивĕçтермелле. Сăмах Шупашкар хулин тата Чăваш автономийĕн юбилейĕсене уявлассипе çыхăннă тĕп мероприятисен планĕсене кĕнĕ объектсем пирки пырать.

■ **К.СЕМЕНОВ**

**КУН хыççăн КУН** ☎ 56-04-26

## Виçĕреш тĕнчене килнĕ

***Çĕмĕрле районĕн администрацийĕнче çут тĕнчене килнĕ виçĕреше регистрациленĕ. Çĕнĕ «кайăксем» нарăс уйăхĕн вĕçĕнче çуралнă.***

Елена Кочергина икĕ чиперккепе пĕр паттăра пурнăç парнеличчен те ывăллă пулнă. Владислав пĕр харăс йăмăксемпе шăллĕллĕ пулса тăрасса ĕмĕтленмен те. Алина, Виктория тата Алексей çемьене чăннипех пысăклатнă. Паллах, ашшĕпе амăшĕн ĕçĕпе тивĕçĕ те пĕр ача хушăнни чухнехинчен чылай ытларах.

Çĕмĕрле райадминистрацийĕн ЗАГС ĕçченĕсем телейлĕ çемьене малашнехи пурнăçра ырă кĕтменлĕхсем кăна суннă.

**М.СЕМЕНОВА.**

## Министерствăри тĕл пулу

***ЧР культура министрĕ Вадим Ефимов çак кунсенче Сочире иртнĕ хĕллехи Олимп вăййисен культура программине илемлетнĕ ачасемпе тĕл пулнă.***



Вĕсем – тĕп хулари ачасен 5-мĕш музыка шкулĕнче вĕренекенсем. Александра Васильева илсе кайнă ушкăн Раççей ачисен пĕрлештернĕ хорĕн йышĕнче (дирижерĕ Валерий Гергиев) юрланă.

Олимпиадăн культура пурнăçĕнче çавăн пекех Шупашкарти ачасен 2-мĕш музыка шкулĕнче ăсталăха туптакан Полина Марковăн та тӳпи пур. Вăл Юрий Башмет ертсе пыракан Пĕтĕм Раççейри ачасен симфони оркестрĕн йышĕнче пулнă.

Ачасем пушă вăхăта усăсăр ирттермен, экскурсисене çӳренĕ, Сочири паллă вырăнсемпе паллашнă. 5-мĕш музыка шкулĕн вĕренекенĕсем Вадим Петровича йышпа ӳкерĕннĕ сăн ӳкерчĕке, Олимпиада паллиллĕ ручка парнеленĕ тата Олимп вăййисем хупăннă каç хорпа юрланă юррăн пĕр пайне шăрантарнă.

В.Ефимов та ачасене пушă алăпа яман, кашнинех ЧР Культура министерствин Тав çырăвĕпе хавхалантарнă.

**Н.СМИРНОВА.**

## Чун ыйтнипе...

***Çак кунсенче Патăрьел районĕнчи Аслă Арапуç вулавăшĕнче Валентина Ендеевăн «Алă ĕçĕ – чун тата чĕре валли» курав уçăлнă. Ăна Культура çулталăкне тата Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунне халалланă.***

Валентина Степановна асăннă тăрăхра тĕрĕ-çĕвĕ ăсти пулнипе палăрать. Çак ĕçе вăл хĕр тусĕсене те явăçтарать. Экспозицире – хĕресле тата вĕтĕ шăрçапа тĕрленĕ картинăсем. Вĕсенче – тăван тăрăх илемĕ, чĕр чун тĕнчи, улăх-çаранри, пахчари, вăрманти чечексем. Маçтăр ĕçе сĕре юратса пурнăçлани палăрать. Вĕсене тĕрлемен, художник ӳкернĕ тейĕн. Валентина Ендеева 1939 çулхи кăрлачăн 25-мĕшĕнче Юхмапа Пăла тăрăхĕнчи Каншел ялĕнче çуралнă. 1972 çултанпа Аслă Арапуçра пурăнать. Чун ыйтнипех вăл çĕрĕ-çĕрĕпе ыйха татса тĕрĕ тĕрлет.

**А.ГРОМОВА.**

*Ыр кăмăллăх*

## Счет уçнă

***Чăваш Ен Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерстви пĕлтернĕ тăрăх – Крымра тата Севастопольте пурăнакансене пулăшмашкăн тенкĕлĕх счет уçнă. Унта Раççей гражданĕсем ыр кăмăллăх тата гуманитари пулăшăвĕн шучĕпе укçа куçарма пултараççĕ. Счета Пĕтĕм Раççейри «Раççей Хĕрлĕ Хĕресĕ» общество организацийĕ йĕркелесе тăрать.***

Вулакансем ăна пуянлатмашкăн пуçаруллă хутшăнасса шанса реквизитсене пĕлтеретпĕр:

| Наименование получателя | Общероссийская общественная организация «Российский Красный Крест» |
|---|---|
| | ИНН: 7728014523<br>КПП: 77281001<br>Счет: 40703810000760000170 в ОАО «БАНК МОСКВЫ» г. МОСКВА<br>БИК: 044525219<br>К/счет: 30101810500000000219 |
| Назначение платежа: | Оказание благотворительной и гуманитарной помощи Крыму и Севастополю |

Чăваш Ен Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерстви çавăн пекех республика çыннисене Крымран куçса килнĕ çемьесене хăйсем патĕнче пурăнмашкăн йышăнмалли майсене пăхса тухма ыйтать.

Республика гражданĕсен информацине /8352/ 62-50-70 телефонпа, soc12@cap.ru электрон почтипе /хăйсемпе çыхăнмалли кăтартусене, сĕнекен пурăнмалли условисене пĕлтермелле/ кĕтеççĕ.

**Çанталăк çинчен**

Паян ăмăр çанталăк пулать, çумăр çукалать. Çил çурçĕр-хĕвел анăçĕнчен çеккунтра 3 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 2 градус ăшă, каçхине 1 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 750 мм, сывлăшри нӳрĕк 83 процент.

**Кун тăршшĕ 11 сехет те 33 минут.**

Ыран улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк пулать. Çил анăçран çеккунтра 4 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 4 градус ăшă, каçхине 2 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 742 мм, сывлăшри нӳрĕк 70 процент.

**Кун тăршшĕ 11 сехет те 37 минут.**

# Патшалăх хресчене еплерех пулăшĕ?

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

2014 çулта инвестици кредичĕ илмелли йĕрке те кăштах улшăннă. Халĕччен тĕрлĕ органа тăратнă документсем саккунсене тивĕçтерсен патшалăх пулăшăвĕллĕ пулчĕç. Малашне инвестици хывассипе çыхăннă проектсене Раççей Ял хуçалăх министерствине çитеретпĕр. Çĕнтерӳçĕсене вăл çирĕплетсе камсене пулăшассине татса парать.

Кредит ставкин процентне субсидилемелли йĕркене те улшăну кĕртессе кĕтетпĕр. Строительствăна, сĕт-çу фермине тĕпрен çĕнетме хывакан инвестици кредитне тавăрмалли тата иртнĕ çулсенче илнĕ процентлă кивçене пролонгацилемелли вăхăта 15 çул таран тăсасшăн. Кун пек кредита Раççей Федерацийĕн Тĕп банкĕн рефинансировани ставкипе – 100, çав шутра республика хыснинчен уйăракан укçаран 3% субсидилеме палăртнă.

Ялта вите хăпартма тĕллев лартнă çемье фермине 2012 çултанпа строительствăпа çыхăннă мĕн пур тăкакăн 60% бюджетран уйăракан кĕмĕлпе саплаштаратпăр. Ку çăмăллăхпа 10 çемье ферми усă курчĕ. Вĕсем 62,7 млн тенкĕ илнĕ. Иртнĕ çулхи раштав уйăхĕнче Раççей Ял хуçалăх министерствинче ĕç пуçаракан фермерсен тата çемье фермисен конкурсĕ иртнĕ. Апла пулсан вĕсене ĕçлеме хавхалантаракан программăна кăçал малалла тăсăпăр.

Раççей шайĕнчи улшăнусене, ĕç пуçлакан фермерсен сĕнĕвĕсене шута илсе вĕсене патшалăх енчен пулăшмалли йĕркене çĕнетрĕмĕр /ЧР Министрсен Кабинечĕн 2012 çулхи ака уйăхĕн 19-мĕшĕнчи йышăнăвĕ/. Унпа килĕшӳллĕн ĕç пуçаракан фермерсем ХФХ тумалли тапхăра 24 уйăха тăснă. Вĕсем ыйтнине шута илсе патшалăх уйăракан пĕтĕм нухрата /1,1 млн яхăн тенкĕлĕх гранта/ йăла ыйтăвĕсене татса пама мар, производствăна çеç яма юрать. Ӳлĕм кашни 500 пин тенкĕлĕх грант пуçне малтанхи пек виçĕ çынна мар, пĕрне кăна ĕçе вырнаçтармалла. Ĕç пуçлакан фермерсен конкурсне иртнĕ çулсенче патшалăх пулăшăвĕпе усă курса харпăр хăйне ĕçпе тивĕçтернисемпе предприниматель çулĕпе кайнисем те хутшăнма пултараççĕ.

Пĕлтĕр республикăн «Чăваш Республикинчи ялсене 2013 çулччен аталантарасси» программине пурнăçламалли тапхăр вĕçленчĕ. Ял çыннин пурнăçне лайăхлатас тĕллевпе кăçалтан «Чăваш Республикинчи ял территорийĕсене 2014-2020 çулсенче аталантарасси» программăна пурнăçлама тытăнатпăр. Унпа килĕшӳллĕн çамрăк çемьесемпе специалистсене тата граждансене çурт тума /туянма/ мĕн пур тăкакăн 70% социаллă тӳлевпе тивĕçтермешкĕн тытăнаççĕ. Чи малтанах унпа нумай ачаллă çемьесем усă курма пултараççĕ. Кунсăр пуçне граждансене вырăнта пуçару туса ĕç пуçлама грант уйăраççĕ, яла аталантарма /тĕрлĕ енĕпе Раççей конкурсне, спорт ăмăртăвне, ытти ыйтăва татса пама/ укçа параççĕ. Çав тӳлевсемпе грантсене тивĕçме ял тăрăхĕсене социаллă пурнăçпа инженери тĕлĕшĕнчен хăтлăлатмалли, вĕсен строительствине, комплекслă, пĕр çĕререх тата АПК объекчĕсемпе çыхăнтарса пурнăçламалли проект пулмалла, пысăк технологиллĕ производствăра хушма ĕç вырăнĕсем йĕркелемелле.

■ **Ирина КОШКИНА,**
**ЧР ял хуçалăх министрĕн çумĕ**

# Пахалăха тĕрĕсленĕ

***Республикăра пурăнакансене 2009-2020 çулсенче ĕçмелли паха шывпа тивĕçтермелли программăпа килĕшӳллĕн Йĕпреç, Буинск, Кире поселокĕсем валли шыв саппасĕ хатĕрлемелле. Ăна çĕр айĕнче шырамалли документаци хатĕр. Проекта Хусанти «Росгеолэкспертиза» ФУ тишкерсе çирĕплетнĕ.***

ЧР Çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министерствин пай пуçлăхĕ Валентина Сергеева çитес çулсенче çуртйĕре таса шыв çитерме пулăшасса çирĕп шанать. Ăна пурнăça кĕртме хутшăннă «Геомониторинг» общество Комсомольски районĕнчи, Пăрачкав ялĕнчен инçе мар лаптăкри Бахмутово шăтăкĕсенчен уçланă ĕçмелли шыв пахалăхне тĕпченĕ.

Комсомольскисен тĕрлĕ çулти 192 пăраланмăшĕнчен 61-шĕпе усă кураççĕ, 16-шĕн харпăрлăхçи çук, 37-шне пĕтернĕ, 9-шне шыв парса тăма саппасланă, 43-шĕ пăрахăça тухнă, 20-шĕ пăрахăça тивĕçлĕ, 6-шĕпе мĕн тумаллине пĕлмеççĕ. Районта талăксерен – 1363, çав шутра кашни литр пуçне 1 грамм минерал тытса тăракан 283 кубла метр шыв уçлаççĕ. Хăш-пĕр шăтăкринче бор, лити çăралăхĕ нормăринчен пысăкрах.

Бахмутово патĕнчи 9 шăтăкри шыв пахалăхĕпе кăсăкланнă. Вĕсене 2009 çулччен пăраланă. 5 шăтăк пуçне тасатнă, хими тĕлĕшĕнчен пахалама 3-шĕнчен шыв илнĕ. Вĕсем ку тăрăхри çĕр айĕнчи шыв пахалăхне тĕрĕслесе тăма кирлĕ. Специалистсем Пăрачкава тивĕçтерме кунта тата темиçе шăтăк пăраласа саппаслама сĕнеççĕ.

■ **С.СЕРЕГИН**

*Брифинг*

# Ертӳçĕ ĕçне мĕнле хаклатăр?

***ЧР экономика аталанăвĕн, промышленноç тата суту-илӳ министрĕн çумĕ Инна Антонова журналистсемпе тĕл пулчĕ. Республика Пуçлăхĕн пуш уйăхĕн 6-мĕшĕнчи "Çынсем вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен, республика тата муниципалитет шайĕнче ĕçлекен унитари предприятийĕсемпе учрежденийĕсен, акцисен ытларах пайĕ Чăваш Ен е муниципалитет харпăрлăхĕнче шутланакан, муниципалитет йĕркеленĕвĕсенче халăха пулăшу кӳрекен акционер обществисен ертӳçисен ĕç-хĕлĕн тухăçлăхне хак парасси çинчен" Указне ăнлантарса пачĕ.***

"Ăна пурнăçласа вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен, халăха общество транспорчĕпе, вĕри тата сивĕ шывпа, электричествăпа, газпа тивĕçтерекен, çул çӳреме май туса паракан, пурăнмалли çуртсене хутса ăшăтакан, вĕсенчен хура шыв юхтарса кăларакан организацисен ертӳçисен ĕç-хĕлĕ çинчен граждансем мĕн шухăшланине çуллен, пуш, 20 – ака, 20-мĕшĕсенче, ыйтса пĕлĕпĕр, – терĕ министр çумĕ. – Ку ĕçе республикăн влаç органĕсен порталĕпе, муниципалитет йĕркеленĕвĕсен официаллă сайчĕпе усă курса йĕркелĕпĕр".

Хуравлама сĕнекен ыйтусем паллă ĕнтĕ. Вĕсене экспертсен ятарлă комиссийĕ /ăна республика Пуçлăхĕн Администрацийĕн ертӳçи ертсе пырать/ хатĕрленĕ. Вăлах хуравсене тишкерĕ. Ыйтăм пĕтĕмлетĕвĕпе республикăра пурăнакансене çу уйăхĕн 1-мĕшĕччен паллаштарĕç. Комисси ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсенчен, министерствăсенче вăй хуракансенчен, республикăн Общество палатин членĕсенчен тăрать. Хуравлама сĕнекен ыйтусенчен пĕри – "Эсир пурăнакан муниципалитет йĕркеленĕвĕн вырăнти хăй тытăмлăх органĕн ертӳçин ĕç-хĕлĕ сире тивĕçтерет-и?"

Ыйтăма хутшăннă çынсен 30 процентĕнчен кая мар йышăнакан ушкăнне общество транспорчĕн ĕçĕн, автоçул, пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшу пахалăхĕ тивĕçтермесен комисси яваплă предприяти ертӳçин ĕç-хĕлне начар пахалĕ. Ыйтăм хыççăн ăна тĕплĕнрех тишкерме ирĕк те, сăлтав та пур. Ертӳçĕпе ĕç килĕшĕвĕ çирĕплетнĕ е ăна тăснă чух комисси хаклавне шута хурĕç. Вăл ĕçе лайăхрах йĕркелес тĕллевпе предприятие сĕнӳсем çитерет, унран аталану программине хатĕрлеме ыйтать. Сасă панисен пĕр пайне вырăнти хăй тытăмлăх органĕн ертӳçин ĕç-хĕлĕ тивĕçтермесен республика Пуçлăхĕ ăна ĕçрен хăтарас ыйту тăратма пултарать.

■ **С.СЕРЕГИН**

# Çивĕч ыйтусем татăлĕç

***Çак кунсенче РФ Президенчĕн федерацин Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕн пулăшуçи Александр Дрожжин видеойышăну йĕркеленĕ: Чăваш Енре, Пушкăртстанра, Киров облаçĕнче пурăнакансен пĕр ушкăнĕн ыйтăвĕсене тишкернĕ.***

Раççей Президенчĕн республикăри йышăну пӳлĕмне Улатăрти Вĕрене урамĕнчи пурăнмалли çуртсене 10 çул каяллах туни, анчах строительсем урама çул хывса хулапа çыхăнтарма манни пирки çыру килнĕ. Унта медицинăн васкавлă пулăшу тата пушар автомашинисем те кĕреймеççĕ. Хула администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Олег Добрынкин çырури йĕркесем пĕтĕмпех тĕрĕссине çирĕплетнĕ.

«Çул проектне хатĕрленĕ, – хуравланă ЧР строительство министрĕн çумĕ Владимир Степанов. – Вăл патшалăх экспертизи витĕр ăнăçлă тухнă. Ăна пурнăça кĕртмешкĕн республикăн Çул-йĕр фондĕнчен укçа уйăрасси пирки Министрсен Кабинечĕн йышăнăвĕн проектне хатĕрлеме пирĕн министерствăна çитернĕ». Видеоканашлăва хутшăннă должноçри çынсем кăçал урама тикĕслеме, 2015 çулта хытă сийлĕ çул хывма шантарнă.

Кӳкеç поселокĕнчи Çĕнĕ Конституци урамĕнчи хĕрарăмсен ушкăнĕ йышăну пӳлĕмне ача-пăча вылявăшне юсаттарас ыйту çитернĕ. Ăна çулталăк каялла çеç çĕнетнĕ-ха. Анчах лапамра шыв юхтармăш туса хăварман, йĕри-тавра карта тытман, йывăç кӳлепе-кӳмеркке сахал. А.Дрожжин çитменлĕхе пĕтерме хушнă. Поселок администрацийĕн пуçлăхĕ Андрей Михайлов вылявăша çуллаччен çĕнетме сăмах панă. Видеоканашлура пăхса тухнă ыйтусене мĕнлерех татса панине федераци округĕн Чăваш Енри тĕп инспекторĕ Геннадий Федоров тĕрĕслесе тăрĕ.

■ **Ю.МИХАЙЛОВ**

# Пиллĕкĕн вилнĕ

***Юлашки вăхăтра республикăри çулсем çинчи аварисенче çынсем ушкăнпах вилнĕ тĕслĕхсем çине-çинех. Черетлĕ инкек иртнĕ тунти кун Çĕрпӳ районĕнче М-7 автотрассăн 671-мĕш километрĕнче пулнă.***

Ирхине 9 сехет тĕлнелле унта виçĕ автомобиль аварие лекнĕ: Чул хула номерĕллĕ ГАЗ-2705, Пушкăртстан номерĕллĕ ГАЗ-3302 тата «Шевроле Клан» – 21-мĕш регион номерĕпе. Малтанлăха палăртнă тăрăх – ГАЗ-2705 автомобиль, 56 çулти водитель тытса пыраканскер, çулăн транспорт хирĕç килекен енне тухнă та тепĕр ГАЗпа тата «Шевролепе» çапăннă.

«Шевроле» салонĕ лăк тулли пулнă темелле: ултă çын, çав шутра пĕчĕк икĕ ача, вĕсене аслисем тытса пынă. 36-ри водитель, 65 çулти хĕрарăм, иккĕри хĕр ачапа унăн çулталăкри шăллĕ çавăнтах вилнĕ. Пĕчĕкскерсен 25 çулти амăшĕ икĕ сехетрен больницăра сывлама пăрахнă. Çемье пуçĕ, 30 çултискер, реанимацире. Вĕсем пурте Патăрьел районĕнчен. ГАЗ-2705 водительне медиксем авари пулнă вырăнта пулăшу кӳнĕ. Ĕç-пуçа тĕпчеççĕ.

**Н.ДМИТРИЕВ.**

*Яваплăх*

# Купăста пахчинчи качака

***Çапла пулмасăр! Ăна саккунлăха тивĕçтерме шаннă, вăл вара çав шанăçпа усă курса хăй саккуна пăснă – пайта курассишĕн. Сăмах – суд приставĕ пулнă çамрăк çын пирки.***

Ун пирки пуçарнă уголовлă ĕçе Следстви комитечĕн республикăри управленийĕн уйрăмах пĕлтерĕшлĕ ĕçсене тĕпчекен пайĕ тĕпчесе пĕтернĕ ĕнтĕ. 27 çулти Михаил Албутова Уголовлă кодексăн темиçе статйипе айăплаççĕ.

Следстви версийĕпе килĕшӳллĕн 2010-2011 çулсенче Албутов производствинче икĕ «Линкольн» лимузин хуçинчен парăм шыраса илмелли ĕçсем пулнă. Укçа шыраса илекенĕн представителĕ Радий Александров бизнесмена суд приставĕсем хайхи автомобильсем тĕлĕшпе усă курнă ареста пăрахăçлаттарма, вĕсене сутса парăма татма шантарнă. Çапла вара Александров суд приставĕсен службинчен суд йышăнăвĕсене пурнăçламалли хутсене илнĕ, машинăсене туянакансене тупнă, парăмлăскер лимузинсене сутнă хыççăн укçана Александрова панă.

Çакăн хыççăн пăнчă лартмалла пек. Анчах Александров çав хутсенех тепĕр хут пурнăçлама тăратнă. Çакна лайăх пĕлнĕ пулин те Албутов саккуна пăсса лимузинсене каллех арестленĕ – саккунлă çĕнĕ хуçасенчен туртса илсе Александрова панă. Ултавлă çак схемăпа усă курса каварлашнă туссем лимузинсен çĕнĕ хуçисене 670 пин ытла тенкĕлĕх сиен кӳнĕ.

Суд приговорĕпе Александрова ултавшăн айăпласа условнăй майпа 5 çуллăха ирĕклĕхсĕр хăварнă. Албутов вара 2012 çулхи çу уйăхĕнче тарса çухалнă – шыравра пулнă. Следстви тĕлĕрмен. 2011 çулхи пуш уйăхĕнче вăл Александрова хупă кăтартусен базинчи информаципе тивĕçтернине те, унран 1 пин тенкĕ взятка илнине те тĕпчесе пĕлнĕ.

Вĕренĕн вĕçĕ пур. Кăçалхи кăрлачра Албутова шыраса тупнă, хупса хунă. Кĕçех вăл суд умне тăрĕ.

■ **Н.СТЕПАНОВ**

# Сĕмсĕр те... шăллă

***Тĕлĕнмелле те, анчах полицейскисене тапăнни, хирĕç тăни пирки пуçарнă уголовлă ĕçсенче хĕрарăмсен хушамачĕсем час-часах янăраççĕ. Этемлĕхĕн черченкĕ пайĕ пакунлисем тĕлĕшпе вăйпа усă курнăшăн хăйсене нимĕн те тумаççĕ тесе шухăшлать-ши?***

Шупашкарти Мускав районĕн сучĕ нумаях пулмасть 35 çулти хĕрарăм приговорне палăртнă. УК 318 статйин 1-мĕш пайĕпе айăпласа ăна 25 пин тенкĕлĕх штрафланă.

Пăтăрмах вара пĕлтĕрхи чӳк уйăхĕн 8-мĕшĕнче çĕрле пулнă. Тĕп хулари каçхи клубсенчен пĕринче çав çĕр конкурс иртнĕ. Условисем çапларах: конкурса хутшăнакансен «2 № изделие» чикнĕ чĕрĕ чăх çăмартисене ватмалла. Никам та ватайман та – конкурс ертӳçи шӳтлесе çăмартана хăнасенчен пĕрин пуçĕ çине çапса ватма сĕннĕ. Конкурса хутшăнакан хĕрарăм вара хăйхи çăмартапа ертӳçе хăйне пуçĕнчен çапнă. Сĕмсĕрскере хуралçăсем фойене илсе тухнă. Хĕрарăм шăв-шав çĕкленĕ те – кану заведенийĕн сотрудникĕсем полицие шăнкăравланă.

Йĕркелĕх хуралçисем килсе çитиччен конкурс ертӳçи те фойене чупса тухнă. Вăл та хĕрарăма пуçĕнчен чĕрĕ çăмартасемпе çапнă – тавăрнă темелле. Часах пакунлисем те çитнĕ. Вĕсем хĕрарăма полицие пыма сĕннĕ. Ку пуçтахскере килĕшмен, вăл полицейскисенчен пĕрне чавсинчен çыртса илнĕ.

Çапла вара çĕрлехи конкурс хĕрарăмшăн 25 пин тенке кайса ларнă теме пулать.

■ **К.АНТОНОВ**

*Криминал*

# Кунсем иртеççĕ – йĕрсем çухалмаççĕ!

***Пӳрне йĕрĕсем преступлени пулнă хыççăн икĕ çултан хуçине тупнă – айăплă çынна суд умне тăратма май панă. Йĕкĕт çартан таврăнасса унăн çывăх çыннисем кăна мар, полици те чăтăмсăррăн кĕтнĕ...***



Эксперт темле пуçтах аркатнă автомобиль çинче тупнă пӳрне йĕрĕсем преступление уçса парасса шанни тӳрре тухнă. Пăтăрмах вара икĕ çул каялла пулнă. ВАЗ-21054 автомобиль хуçи следствие пулăшайман: унăн çăмăл машинине аркатмаллипех аркатнă та – çапла тавăрмашкăн вăл никама та усал туман. Пуçтах машина капотне авнă – унăн кĕтесне 180 градус тавăрса хунă темелле. Çийĕнчен багажник çине хăпарса сикнĕ, сылтăм алăк кантăкне ватнă. Сиенĕ – 25 пин тенкĕлĕх.

«Жигули» Çĕмĕрле районĕнчи Вăрманкас ялĕнчи çурт патĕнче ларнă. Хуçи çĕрле иккĕленӳллĕ сасăсем илтмен. Ял çыннисем никама та асăрхаман. Эксперт вара иккĕленмен: пӳрне йĕрĕсене тем тесен те преступник хăварнă...

Çак тĕслĕхпе вырăнти шалти ĕçсен пайĕ уголовлă ĕç пуçарнă. Малтанах ялти пуçтах çамрăксене шанман-ха, анчах ку верси тӳрре тухман. Хуçи автомобиле хăйĕн шучĕпе юсанă, пăтăрмах пирки манма та ĕлкĕрнĕ темелле. Анчах полицейскисем манман иккен.

Вĕсем уголовлă ĕçе инçетри сунтăха чиксе хуман. Вăхăт иртнĕ май хайхи пӳрне йĕрĕсем Çĕмĕрле çамрăкĕн, 20 çултискерĕн, пулни палăрнă. Маларах вăл полицейскисен куçĕ тĕлне пулман. Çара кайма ят тухсан обязательнăй йĕркепе дактилоскопи витĕр тухнă. Çавна май компьютер унăн пӳрне йĕрĕсене палласа илнĕ. Оперативниксем çамрăк çынпа курнăçас тенĕ те – кăшт кая юлнă иккен: йĕкĕт çара кайса ĕлкĕрнĕ. Йĕрки пур: кунашкал тĕслĕхсенче призывнике çартан каялла илсе килмеççĕ, вăл службăна вĕçлесе демобилизациленессе кĕтеççĕ.

...«Дембель» хăйĕн патне право хуралĕн органĕсен сотрудникĕсем пырса кĕрсен тĕлĕнсех кайнă. Çук, тунса тăман, пĕтĕмпех каласа панă. 2011 çулхи çуркуннехи çав каç вăл савнийĕпе хирĕçсе кайнă – пĕтĕм тĕнчене кӳреннĕ теме пулать. Мопедне утланнă та ăçта куç курать – çавăнталла пысăк хăвăртлăхпа вĕçтернĕ. Вăрманкаса пырса тухнă. Кунта вăл маларах та пулла çӳренĕ. Самай вăхăт кулянса ларнă хыççăн пĕр çурт патĕнчи ВАЗа асăрханă. Унăн çилли шăпах çак автомобиль çине тăкăннă...



Шалти ĕçсен пайĕн следстви пайĕн пуçлăхĕ Валерий Ануфриев каланă тăрăх – каччă хăйĕн айăпне пĕтĕмпех йышăннă, сиене туллин саплаштарнă. Вăл ыйтнипе уголовлă ĕçе суд следстви пухнă ĕнентерӳ материалĕсене тĕплĕ тишкермесĕрех уйрăм йĕркепе пăхса тухнă. Çамрăк çынна çулталăклăха условнăй майпа ирĕклĕхсĕр хăварнă.

Сăмах май, хăй пĕлмесĕрех çак пăтăрмаха сăлтавланă савнийĕпе йĕкĕт тахçанах сыв пуллашнă-мĕн.

■ **Ольга ПАВЛОВА**

# Иномаркăсене тупнă

***Шупашкарти Гараж тăкăрлăкĕнчи автосалонран такамсем çĕнĕ икĕ иномаркăна вăрласа кайни чăннипех тĕлĕнтернĕччĕ. Вунă кун иртсен полици вĕсене тупнă.***

Хаклă «Митсубиси Паджеро Спорт» тата «Митсубиси Аутлендер» çухалнă. Шурă тата хура икĕ машинăна, паллах, çĕр çăтман. Салон ертӳçисем ревизи ирттернĕ май джипсем çухалнине палăртнă. Видеосăнав камерисене тĕпченĕ май автомобильсене нарăсăн 23-мĕшĕнче каçхине вăрласа кайни палăрнă. Паллă мар икĕ çын хурал постĕнчен двигательсене хута ямалли уçăсене илнĕ те автомобильсене хускатса тухнă. Машинăсем юрпа витĕнни те чăрмантарман.

Тĕп хулан шалти ĕçсен управленийĕн оперативникĕсем ШĔМĕн уголовлă шырав управленийĕ ертсе пынипе темиçе кунран вăрăсен йĕрĕ çине ӳкнĕ, машинăсем ăçтине тупса палăртнă. Иномаркăсем инçе кайса ĕлкĕреймен иккен – Шупашкарти гараж боксĕсенчех ларнă. Сĕмсĕр преступление малалла тĕпчеççĕ.

**К.НИКОЛАЕВ.**

*Пĕтĕмлетӳ*

# 2013 çулхи тĕллевсем пурнăçланнă

### «Çу уйăхĕнчи» указсем

Çĕр-шыв Президенчĕн Владимир Путинăн «çу уйăхĕнчи» указĕсене мĕнле пурнăçа кĕртнине Раççей Федерацийĕн Правительстви тĕплĕн сăнаса тăнине пурте пĕлетпĕр. Вĕсене Чăваш Республикин Пуçлăхĕ те тĕрĕслесех тăрать. РФ Президенчĕн «çу уйăхĕнчи» указĕсене – бюджет тытăмĕнче ĕçлекенсен уйрăм категорийĕсен вăтам шалăвĕн шайне ӳстерессипе çыхăннисене – 2013 çулта мĕнлерех пурнăçланин пĕтĕмлетĕвĕсене Михаил Игнатьев Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаç органĕсен ертӳçисемпе юлашкинчен ирттернĕ канашлура пăхса тухнă. Чăваш Енре социаллă сфера тытăмĕсенче 2013 çул валли «çул-йĕр карттисемпе» çирĕплетнĕ тĕллевсене ĕçченсен пĕтĕм категорийĕ /РФ Президенчĕн указĕсенче палăртнисем/ тĕлĕшпе туса çитернĕ.

ЧР Министрсен Кабинечĕ 2013 çулта республикăри патшалăх учрежденийĕсен ĕçченĕсен уйрăм категорийĕсен ĕç укçине ӳстерессипирки тăвата хутчен йышăну тунă: 2013 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен, ака уйăхĕн 1-мĕшĕнчен, утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен тата юпа уйăхĕн 1-мĕшĕнчен. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем те çавнашкалах йышăнусем тунă. Çакă çӳлерех асăннă çынсен категорийĕсен вăтам шалăвне ӳстерме май панă.

Чăвашстат кăтартăвĕсем тăрăх – пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вĕренӳ учрежденийĕсенчи педагогика ĕçченĕсен вăтам шалăвĕ 20141,4 тенкĕпе е Чăваш Республикинчи вăтам ĕç укçин 103,7%-пе танлашнă, 100% тĕллевлĕ пĕлтерĕшпе /2012 çулхипе танлаштарсан 28,7% ӳснĕ/;

шкулччченхи вĕренӳ учрежденийĕсенчи педагогика ĕçченĕсен – 17756,1 тенкĕпе е пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тытăмри вăтам ĕç укçин 102,3%-пе, 100% тĕллевлĕ пĕлтерĕшпе /ӳсĕм – 72,8%/;

ачасене хушма пĕлӳ паракан учрежденисенчи /вĕрентӳ, культура тата спорт тытăмĕсенчи/ педагогика ĕçченĕсен – 16322,5 тенкĕпе е учительсен вăтам ĕç укçин 79,9%-пе, 75% тĕллевлĕ пĕлтерĕшпе /ӳсĕм – 55,6%/;

аслă професси пĕлĕвĕ паракан вĕренӳ учрежденийĕсен преподавателĕсен – 22092,3 тенкĕпе е Чăваш Республикинчи вăтам ĕç укçин 113,7%-пе, 110% тĕллевлĕ пĕлтерĕшпе /ӳсĕм – 44,8%/;

пуçламăш тата вăтам професси пĕлĕвĕ паракан вĕренӳ учрежденийĕсенчи производство вĕрентĕвĕн преподавателĕсемпе мастерĕсен – 18070,9 тенкĕпе е Чăваш Республикинчи вăтам ĕç укçин 93%-пе, 75% тĕллевлĕ пĕлтерĕшпе /ӳсĕм – 23,9%/;

учрежденисен ăслăлăх сотрудникĕсен – 25554,8 тенкĕпе е Чăваш Республикинчи вăтам ĕç укçин 131,6%-пе, 128% тĕллевлĕ пĕлтерĕшпе /ӳсĕм – 88,6%/;

культура учрежденийĕсен ĕçченĕсен – 11888 тенкĕпе е Чăваш Республикинчи вăтам ĕç укçин 61,2%-пе, 57,8% тĕллевлĕ пĕлтерĕшпе /ӳсĕм – 24,8%/;

социаллă ĕçченсен – 9579,8 тенкĕпе е Чăваш Республикинчи вăтам ĕç укçин 49,3%-пе, 47,5% тĕллевлĕ пĕлтерĕшпе /ӳсĕм – 61,4%/;

медицина организацийĕсен ĕçченĕсемпе врачсен, медицина /фармацевтика/ е урăх аслă пĕлӳллисен, медицина пулăшăвĕпе тивĕçтерекеннисен – 28430,5 тенкĕпе е Чăваш Республикинчи вăтам ĕç укçин 146,4%-пе,129,7% тĕллевлĕ пĕлтерĕшпе /ӳсĕм – 21%/;

медицина /фармацевтика/ вăтам персоналĕн /медицина пулăшăвĕпе тивĕçтермелли условисене туса хураканнисен/ – 16215,6 тенкĕпе е Чăваш Республикинчи вăтам ĕç укçин 83,5%-пе, 75,6% тĕллевлĕ пĕлтерĕшпе /ӳсĕм – 20,1%/;

медицина кĕçĕн персоналĕн /медицина пулăшăвĕпе тивĕçтермелли условисене туса хураканнисен/ – 10041,7 тенкĕпе е Чăваш Республикинчи вăтам ĕç укçин 51,7%-пе, 50,1% тĕллевлĕ пĕлтерĕшпе /ӳсĕм – 54,9%/.

Пĕтĕмĕшле илсен 2013 çулта Чăваш Республикин пĕрлештернĕ бюджетĕнчен бюджет тытăмĕнче ĕçлекенсене шалу тӳлеме уйăрнă укçа-тенкĕ ӳсĕмĕ 2012 çулхи шайпа танлаштарсан 18,6% /2212,1 млн тенкĕ/ пулнă, çак тĕллевпе пĕтĕмпе 14109,3 млн тенкĕ панă.

### Финанс çулталăкне ăнăçлă вĕçленĕ

Пуш уйăхĕ организацисемшĕн пĕрлехи пулăмпа – çулталăк отчетне тунипе – асра юлать. Финанс тĕп документне – Чăваш Республикин пĕрлештернĕ бюджетне – мĕнлерех пурнăçлани пирки Чăваш Республикин Правительстви те отчет тăратнă. Унпа килĕшӳллĕн республика 2013 çула бюджет тĕллевĕсен ӳсĕмĕн ырă динамикипе вĕçленĕ.

2013 çулта Чăваш Ен Правительстви хамăрăн тупăшсене ӳстерессипе, бюджета планлассин тата пурнăçлассин пахалăхне лайăхлатассипе, Чăваш Республикин патшалăх парăмне чакарассипе çыхăннă мерăсен комплексне ирттернĕ.

Налук хурас тытăма тата налуксемпе пухусене лайăхлатассипе çыхăннă мерпориятисене йĕркеленĕрен хăш-пĕр кăтартăва ырă еннелле улăштарма май килнĕ. Акă туса ирттернĕ ĕçе шута илсе Чăваш Республикин пĕрлештернĕ бюджечĕ 2013 çулта тупăшсем енчен 43079,2 млн тенкĕлĕх е çулталăкри планăн 100,0% чухлĕ пурнăçланнă, 2012 çул тĕлĕшпе ӳсĕм 2963,2 млн тенкĕлĕх, ку 7,4% пулать.

Чăваш Республикин бюджечĕ 2013 çулта Раççей Федерацийĕн «çу уйăхĕнчи» указĕсемпе палăртнă приоритетлă тĕллевсемпе йĕркеленнĕ. Асăннă бюджетри хамăр тупăшсем /налуксемпе тата налук маррисемпе çыхăннисем/ 27921,9 млн тенкĕлĕх пурнăçланнă, 2012 çул тĕлĕшпе ӳсĕм 2346,3 млн тенкĕлĕх, ку 9,2% пулать. Танлаштарма: Раççейре хамăр тупăшсен ӳсĕмĕ 3,2% пулнă, федерацин Атăлçи округĕнче /ФАО/ – 5,1%. Чăваш Ен ФАО субъекчĕсен хушшинче 4-мĕш вырăнта.

Чăваш Республикин пĕрлештернĕ бюджечĕн хамăр тупăшсен тытăмне тишкерес тĕк налук тупăшĕсем 90,0% танлашнă, налукпа çыхăнманнисем – 10,0%. Налук тупăшĕсен тĕп пайĕ организацисен тата уйрăм çынсен тупăшĕсем çине хунă налуксене пырса тивет, вĕсен тӳпи пĕтĕм налуксен 61,2% пулать. 2013 çулта организацисен тупăшĕсем çине хунă налукран илнĕ тупăш 5234,4 млн тенкĕпе танлашнă, ку вăл 2012 çулхи шайран 0,4 процентлă пункт сахалрах. Çапах çакнашкал туртăм пĕтĕм регионра палăрать. Раççейре ку кăтарту 13,1 процентлă пункт чухлĕ пĕчĕкленнĕ, ФАОра – 9,5 процентлă пункт. Чăваш Ен ФАО субъекчĕсен хушшинче 2-мĕш кăтартупа палăрнă.

Уйрăм çынсен тупăшĕсем çине хуракан налуксем тĕлĕшпе ӳсĕм пулнă. Вĕсен сумми 10134,8 млн тенкĕпе танлашнă, ку вăл 2012 çулхи шайран 9,7% нумайрах. Раççейре те ӳсĕм палăрать: çĕр-шыври вăтам кăтарту – 10,5%, ФАОра – 11,4%. 2013 çулта республика бюджет тивĕçтерĕвне тикĕслемешкĕн 7037,9 млн тенкĕлĕх дотаци илнĕ, ку вăл 2012 çулхинчен 1636,0 млн тенкĕ /30,3%/ нумайрах.

Чăваш Ен бюджечĕн тăкакĕсем патне куçнă май вăл социаллă пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртмалла. Чăваш Республикин пĕрлештернĕ бюджечĕ 2013 çулта тăкаксен тĕлĕшпе 44456,9 млн тенкĕлĕх пурнăçланнă, ку 2012 çулхи бюджетран 2235,1 млн тенкĕ /5,3%/ нумайрах.

Владимир Путин хăйĕн «çу уйăхĕнчи» указĕсенче регионсене социаллă политика, сывлăха сыхлас ĕç, вĕрентӳ, ăслăлăх тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх валли ытларах укçа уйăрма чĕнсе калани никамшăн та вăрттăнлăх мар. Çакна тĕпе хурса Чăваш Республикин пĕрлештернĕ бюджечĕн социаллă пурнăçпа культура сфери çине кайнă тăкакĕсем пысăкланнă та 31155,2 млн тенкĕпе танлашнă, ку расхутсен пĕтĕмĕшле калăпăшĕн 70,1%, 2012 çулхипе танлаштарсан 1352 млн тенкĕ е 4,5% нумайрах.

Çакна палăртмалла: социаллă тăкаксем пысăкланнă май Чăваш Республикин патшалăх парăмĕ 2014 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне 2013 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчи шайпа танлаштарсан 381,6 млн тенкĕ /3,7%/ чакнă, 9827,1 млн тенкĕ пулнă, ку вăл планланă шайран 935,4 млн тенкĕ /8,7%/ сахалрах.

Юлашкинчен çакна палăртмалла: 2013 çул пĕтĕмĕшле илсен республикăшăн ăнăçлă пулнă, ЧР Правительстви хăйĕн бюджет обязательствисене тĕрĕс те вăхăтлă пурнăçлани ăна 2014 çулта та шанчăклă старт илме май панă.

Юбилей

# Чăваш тăвансемшĕн тăрăшса

### /В.К. Магницкий çуралнăранпа 175 çул çитет/

***Истори сучĕ сăваплă, кашнинех мĕн пӳрнине парать вăл. Пурăннă чухне ятне-сумне тивĕççĕр илнисем манăçа тухаççĕ, тăван халăхшăн ырми-канми ĕçлекенсем вара вилсен те ăрусен асĕнче-ĕçĕнче пурăнаççĕ. XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче Вăтам Атăл тăрăхĕнчи халăхсене çутта кăларассишĕн чунран тăрăшнă паллă этнографăн, фольклористăн Василий Константинович Магницкин ырă ячĕ чăваш асĕнче паян кун та упранать.***



В.К.Магницкий 1839 çулхи пуш уйăхĕн 3/15/-мĕшĕнче Хусан кĕпĕрнин Етĕрне уесĕнчи Чирĕккасси ялĕнче /халĕ Етĕрне районне кĕрет/ Шăматра /халĕ Советски/ ĕçлесе пурăннă вырăс священникĕн çемйинче çуралнă. Пулас ăсчахăн ашшĕ чăвашсен паллă педагогĕпе И.Я.Яковлевпа çыру çӳретнĕ. Çакă, паллах, В.К.Магницкин тĕнче курăмне анлăлатма пулăшнă.

Ашшĕ çулĕпе кайса 1848-1857 çулсенче малтан Шупашкарти тĕн училищинче, унтан Хусанти тĕн семинарийĕнче вĕреннĕ вăл. Анчах тĕн вĕренĕвĕ çамрăк Магницкие тивĕçтермен курăнать, 1858 çулта Хусан университечĕн юридици факультетне кĕнĕ.

Пулас ученăй вĕренӳ çулĕсенчех этнографипе, фольклорпа кăсăкланнă. Чăвашсене çутта кăларас ĕç ыйтăвĕсене студент чухнех хускатнă. 1861 çулта «Хусан кĕпĕрнин ведомоçĕнче» унăн пĕрремĕш статйи – «Женские чувашские школы в Ядринском уезде» – пичетленсе тухнă. Унта вăл Атăл тăрăхĕнчи вырăс мар халăхсене вĕрентес ыйтăва çивĕччĕн хускатнă.

Университет пĕтерсен, 1877 çулччченех, Шупашкар уесĕнче суд следователĕнче ĕçленĕ, Аслă Сала ялĕнче /хальхи Куславкка/ пурăннă. Хресченсене вăй çитнĕ таран пулăшнă. Вĕсен хутне кĕнĕшĕн ăна хăйне те айăплама пăхнă.

Аслă Салара пурăннă вăхăтра Хусан университетĕнчи тавра пĕлӳ-ăсчахсемпе çыру çӳретнĕ. Чăваш шкулĕсен малтанхи инспекторĕсенчен пĕрне, Н.И.Золотницкий чĕлхеçе, хăйĕн вĕрентекенĕ тесе хисепленĕ. Этнографи, чĕлхе, фольклор материалĕсене тăтăшах ярса тăнă ун патне. Сахал йышлă халăхсене çутта кăларас ĕç ыйтăвĕсемпе чылай чухне вăл Золотницкипе тавлашнă та. 1867 çулхине Н.И.Золотницкий шовинистла статья çырсан Магницкий тепĕр çулах «По инородческому делу» витĕмлĕ ĕç пичетленĕ. Çав тавлашура чăвашсене хĕрхенни, хисеплени курăнать, халăх хăй тĕллĕн аталанма кирлине ĕнентерет автор, чăвашсен те профессионал культури аталанасса шанать.

Аслă Салара пурăннă çулсенче Магницкий халăх сăмахлăхне ырми-канми пуçтарнă. Вăл чăваш хресченĕсем каланине çеç мар, вырăссенчен мĕн илтнине те çыра-çыра хунă. Ку ĕçе тĕрлĕ корреспондента явăçтарнă, хăй те экспедицисене тухса çӳренĕ, халăх каларăшĕсене, сутмалли юмахсене, ваттисен сăмахĕсене пухнă. Çак ялтах вăл «Песни крестьян из села Беловолжского» ятлă пысăк сборник пухса çитернĕ, «Нравы и обычаи в Чебоксарском уезде» фольклорпа этнографи пуххине хатĕрленĕ, «Очерк юридического быта чуваш» /1866/, «Селения 2-го следственного участка Чебоксарского уезда» /1870/, «Этнографический очерк преступлений и проступков на 2-м участке Чебоксарского уезда» /1871/ тата ытти паллă ĕçсем çырнă.

Çемье пурнăçĕ ăнман В.К.Магницкин. Арăмĕ ĕçке ернине пула вăл Аслă Саларан тухса кайнă.

Çĕнĕ тапхăр пуçланнă ун пурнăçĕнче. Наукăпа педагогикăна пуçĕпех парăннă вăл. Малтанласа ăна Вятка кĕпĕрнин Уржум уесĕнчи халăх училищисен инспекторне лартнă. 1882 çултан пуçласа Лаишев, Спас, Сĕве, Теччĕ, Шупашкар уесĕсен халăх училищисен инспекторĕнче ĕçленĕ, каярахпа, мĕн пенсие тухиччченех, – Елабуга уесĕнчи училищĕсен инспекторĕнче. В.К.Магницкий кирек ăçта ĕçлесен те вырăс мар халăхсене вĕрентессишĕн чунне парса тăрăшнă, çĕнĕ училищĕсем уçасшăн çуннă, учительсемпе вĕренекенсем терт-асап курса пурăнни çинчен пăшăрханса çырнă, халăхсен тăван чĕлхипе вĕренме кирлине ĕнентернĕ. 1860 çулсенчех вăл чăваш ачисем хăйсен ăс-тăн аталанăвĕпе юларах пыраççĕ текен шовинистсене хирĕç кĕрешнĕ. «Училище пуçлăхĕсем каланине шута илес тĕк – чăвашсен чылай ачи вырăссенчен те аванрах вĕренет», – тесе çырнă вăл. «Стипенди пулсан гимназисенче те вĕренес кăмăллă пулĕччĕç чăваш ачисем, гимназирен вара университета та кĕме инçех мар», – тенĕ вăл пысăк шанчăкпа. Чăвашсем çинчен тĕрĕс мар çырнисене хирĕçлесе 1881 çулта «Замечания на этнографический очерк быта чуваш И.Меньшова» статья çырнă. Унта вăл чăваш кăмăлĕ, пурнăçĕ, йăли-йĕрки çинчен суйса çырнине питленĕ.

В.К.Магницкий тин çеç йĕркеленме пуçланă чăваш интеллигенцине хисепленĕ. И.Юркинпа туслă çыхăну тытнă, С.Михайлов, Н.Охотников çинчен биографи очеркĕсем çырнă, «Арçури» авторне лайăх пĕлнĕ. Халăх училищисен инспекторĕ пулнă май çĕнĕ шкулсем уçассишĕн нумай тăрăшнă. 1884-1886 çулсенче çеç вăл пуçарнипе 33 шкул уçнă. Вĕрентӳ ĕçĕнчи çитĕнӳсемшĕн ăна кĕмĕл медаль парса чысланă.

Темĕн валли те вăхăт çитернĕ тĕпчевçĕ: 1897 çулта Раççейре ирттернĕ çыравра шутлавçă ĕçне пурнăçланă, вĕренме кĕмелли экзаменсем йышăннă. Реакционерсем халăхсене вăрçтарса ярас тĕллевпе «удмурт халăхĕ çынсемпе чӳклет» тенине хирĕçленĕ вăл. 1899 çулта юлташĕ патне ученăй çапла çырнă: «Ăçта пăхсан та пăнтăх çынсем хуçаланаççĕ, çутă пайăрки ниçтан та курăнмасть...»

Халăха вĕрентес ĕçе йĕркелесе пынипе пĕрлех Магницкий хăй пурăннă тăрăхри халăхсен йăли-йĕркине, культурине тĕпчеме пăрахман. «Приволжские чуваши» этнографи очеркĕ, «Из быта чуваш Казанской губернии» тата ытти ĕç çырнă, Атăл тăрăхĕнчи халăхсем çинчен те тĕрлĕ статья йышлă пичетленĕ. Вăл Хусан университечĕ çумĕнчи этнографи, истори, археологи обществин, естествоиспытательсен обществин, Археологи комиссийĕн членĕ шутланнă. Мускав университечĕ çумĕнчи антропологи, этнографи, естествознани обществине тачă çыхăну тытнă.

В.К.Магницкий – демократ шухăшлă вырăс этнографĕ. Вăл «çутта тухнă цивилизаторсене» /наука çыннисене çапла каланă/, «чăвашсем çинчен суйса, тĕрĕс мар çыракансене» критиклеме чарăнман. Магницкин наука интересĕсем мĕн тери нумай енлĕ пулнинчен тĕлĕнетĕн. Чăвашсем ăçтан пулса кайнипе те кăсăкланă вăл. Çак тĕллевпех ĕлĕкхи тĕне кĕмен чăвашсен арçын ячĕсене 10 пине яхăн пухнă. Каярахпа, 1905 çулта, «Чувашские языческие имена» ятлă кĕнеки тухнă. Чăвашсен паллă историкĕ В.Ф.Каховский шухăшланă тăрăх – Магницкий тупса палăртнă 173 йăх таврашĕсен авалхи тĕрĕк ячĕсем чăвашсем Азири ытти халăхпа мĕнле çыхăнура пулнине тĕпчеме май параççĕ. Чăвашсен авалхи историне ăнланас тĕллевпех таврари археологи сведенийĕсене те пухнă вăл. Чăваш тумĕ, туй йăли-йĕрки, анатрипе турисен чĕлхин, культурин уйрăмлăхĕсем, чăвашсемпе вырăссен культура тĕлĕшĕнчи çыхăнăвĕсем çинчен чылай ĕç çырнă В.К. Магницкий. Православи тĕнне йышăниччченхи чăвашсен авалхи тĕнне те тĕпчеме тытăнса пăхнă. Унăн «Материалы к объяснению старой чувашской веры» /1881/ тата ытти ĕçĕпе тĕпчевçĕсем паянхи кун та усă кураççĕ. Чăваш диалектологийĕпе лексикине пухнă пуян материалсем те чĕлхеçĕсемшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Ăсчах чăвашсен историне, этнографине тĕпчесе «Чуваши» ятлă пысăк кĕнеке кăларасшăн пулнă, анчах ку ĕçе вĕçне çитереймен. 1901 çулхи пуш уйăхĕн 4-мĕшĕнче ӳпке чирĕпе нушаланса вилнĕ.

В.К.Магницкий пухнă материалсем, унăн ал çырăвĕсем пирĕн архивсенче нумай. Хисеплĕ ентешĕмĕрĕн чи лайăх ĕçĕсене пухса кун çути кăтартасчĕ. Çапла çеç эпир чăвашлăха тĕпченĕ вырăс ученăйпедагогăн ырă ятне сума сунă пулăттăмăр.

■ **Виталий ИВАНОВ,**
**истори наукисен докторĕ, профессор**

Пахчара

# Мулкач кăшланă-и е шăши-и?

Сисмерĕмĕр те – пуш уйăхĕ те алăкран шаккарĕ: сад-пахча ăстисен хĕрӳ тапхăра хатĕрленмелли вăхăт çывхарса пырать. Çавăнпа та ку енĕпе вулакансене хăш-пĕр сĕнӳпе пулăшнă пулăттăм.

Хĕвел çӳлелле кармашнă май хĕрӳлĕхĕ те вăйланса пырать. Юр ирĕлме тытăнсанах хăшĕпĕри йывăç айĕнче нӳрĕке ытларах сыхласа хăварас тесе çав тĕле навус, пăчкă кĕрпи сарма пикенет. Апла тумашкăн сĕнмен пулăттăм, мĕншĕн тесен йывăçăн çĕр çийĕнчи пайне, хĕвел питтинче ăшăннă сывлăшпа хĕл ыйхинчен вăранма ĕлкĕрнĕскере, тутлăхлă япала, нӳрĕк кирлĕ. Шăннă тăпрари тымар вара вĕсемпе тивĕçтерейместь, вулă типме тытăнать.

Мулкач е шăши çамрăк улмуççи турачĕн хуппине кăшланă тăк ăна папка таран хăварса касмалла, сиенленнĕ вырăна пир татăкĕпе е марльăпа чĕркесе йывăç типесрен юрпа хупламалла. Каярахпа çав тĕле çиелтен ятарлă сăмала е ĕне каяшĕпе тăм хутăшĕ сĕрмелле, татăкпа е хутпа хупласа полиэтилен пленкипе çыхмалла. Çутă лекмесен тата нӳрĕ сывлăшра суран кĕске хушăрах тӳрленет.

Турат чĕрпекленнĕ тĕк аял енчен брус хурса иккĕшне çирĕппĕн çыхса хумалла.

Сывлăш температури 10 градус сивĕрен чакма тытăнсан çимĕç йывăççин туратне иртме юрать. Ку ĕçе папка сарăличчен пурнăçламалла. Çакă турат вĕçĕнче вырнаçнисене йĕркеленсе çитме тата тухăçа ӳстерме пулăшать.

Хунава каснă чухне асăрханулла пулмалла: малтан ватăраххисене – çимĕç параканнисене /çимĕç йĕркеленмелли папкасем иртерех вăй илеççĕ/ иртмелле, икĕ эрнерен – çамрăккисене.

Ку ĕçе улмуççирен тытăнмалла, мĕншĕн тесен çанталăк сивĕтсен те вăл çакна çăмăллăнах чăтса иртерет. Слива, чие тата груша йывăççисене вара – чечеке ларичченех.

Сиенленнĕ, кукăрăлнă-пĕтĕрĕннĕ, шалалла ӳсекен туратсене тĕп вулăран 30 градус кĕтеспе йӳпленнĕ тĕлти хупă ункăланса тăнă çĕртен касмалла. Çавăнта хăвăрт аталанакан клеткăсем сурана çийĕнчех сиплеççĕ.

Çамрăк хунав çинче хĕл каçнă хурт-кăпшанкă йăвине асăрхасан илсе пăрахмалла та çунтарса ямалла.

Кĕрхи кунсенче хăмла çырлин лаптăкне йĕркене кĕртме ерçеймен тĕк ĕçе пуçăнма кая юлман-ха: типнĕ хунавсене, чĕррисен вĕçĕсене амантмасăр /вĕсене те 10-15 см кĕскетме юрать/, çĕр çийĕпе тан касмалла.

Касса пăрахнă хунавсенчен пысăкраххисене çунтармалла, вĕтĕреххисене компост купине хумалла.

Хĕрлĕ, хура тата йĕплĕ хурлăхансен ватă, вĕтĕ, аманнă хунавĕсене тĕпрен касмалла.

Çак ĕçсене пурнăçлама ятарлă хачă – секатор – кирлĕ. Унашкаллисем пĕр тата икĕ енĕпе касаканнисем пулаççĕ. Пĕрремĕшĕ туратăн касса илнĕ пайне кăна сиенлет. Унпа чĕрĕ хунавсене иртеççĕ. Хăрăккисене тасатмашкăн иккĕмĕшĕпе усă курмалла. Типĕ тата пысăк туратсене сад пăчкипе сайралатма меллĕ.

■ **Василий МИХАЙЛОВ, сад ăсти.**
Шупашкар хули

Вĕçен кайăк

# Çуркуннехи сунар сиен кӳрет



Çут çанталăка хӳтĕлекенсем, тĕпчекенсем, сунарçăсен пысăк ушкăнĕ çуркунне шыв-шурпа хырлăх вĕçен кайăкне тытмашкăн чарма ыйтаççĕ.

Хальхи вăхăтра федерацин кашни регионĕнчех çак пуçарăва майлă çынсене алă пустараççĕ. Çуллен ака-çу уйăхĕсенче сунар тапхăрне уçнине мĕншĕн хирĕç-ха? Вăл сунар пуянлăхне те, ирĕкри кайăка та пысăк сăтăр кӳрет.

Орнитологсем Раççейĕн нумай регионĕнче унăн йышĕ пĕчĕкленнине, сăлтавĕ çуркуннехи сунар тапхăрĕ пулнине палăртаççĕ. Пулă вăлча сапнă, вăрман чĕр чунĕ çăвăрланă-пăруланă чух патшалăх вĕсене тытма чарать. Кайăк йăва çавăрнă, çăмарта тунă хушăра мĕншĕн «капкăна» лектерме ирĕк пафаççĕ?

Тăван тавралăх чĕрĕлнĕ уйăхсенче сунарçă объектне кĕрекеннине çеç мар, кĕменнине те пайтах пĕтереççĕ. Пăшаллă çын шыв-шур таврашĕнче йытăпа çӳресе хăратнă пирки йăвана, чĕпсене пăрахса урăх вырăна куçать. Хĕрлĕ кĕнекене кĕртни те сиен тӳсет. Вĕсен пĕр ушкăнĕ хĕл каçакан çĕршывран мăшăрлансах таврăнать. Сунарçăсем шуйхатнăран тата тытнăран çемье саланать. Тепре мăшăрланса çăмарта каярах тăваççĕ, ăшă çĕре вĕççе кайиччен чĕпсене çирĕплетсе ĕлкĕреймеççĕ. Ку та йыша пĕчĕклетет.

Сунарçăсем çуркунне карăкпа ăсан кĕтĕвĕсене хӳтерсе-салатса ĕрчеме чăрмантараççĕ. Хĕл каçнă вырăнтан Раççее чи çирĕп, ăнăçлă йăхлăх кайăк çеç вĕççе çитет. Йăмшакки ăшă çĕрте е çул çинче вилет. Шел, çирĕппи, йыша пысăклатма хатĕрри, «серепене» çакланать. Çуркуннехи сунар тапхăрĕ пынă чух чылай регионти вăрмана вут хыпать. Пушар чĕр чуна кăна мар, хырлăх кайăкне те инкек кӳрет. Вăл тата шыв-шур кайăкĕ çуллен хухни çĕр-шыври сунар хуçалăхĕсем çут çанталăк пуянлăхĕпе перекетлĕ усă курманнине çирĕплетет. Вĕсен тавралăха пайта кӳмелле, тăкак кăтартмалла мар. Çуркуннехи сунар тапхăрне ирттерме чарнă патшалăхсенче кайăк лайăхрах ĕрчет.

Раççей ака-çу уйăхĕсенче шыв-шур, хырлăх кайăкне тытма ирĕк паракан темиçе çĕр-шыв хушшинче шутланнă май пирĕн патран Хĕвел анăç Европăна, Çывăх тата Вăтам Хĕвел тухăçне, Индостана, Кăнтăр-Хĕвел тухăç Азие хĕл каçма вĕççе каякан кайăк-кĕшĕке сунар йĕркелесе сахалрах тытмашкăн çирĕп ыйтма пултараймасть. Мĕншĕн тесен ăна хамăр пайтах пĕтеретпĕрçке. Пăлхарта, Турцире вара хĕллехи уйăхсенчи сунар тапхăрне те кĕскетнĕ. Вĕсенче кайăксене хӳтĕлесси çинчен ытларах шухăшлаççĕ.

Раççей сунарçисемшĕн, тен, Инçет Çурçĕрте пурăнаканнисемсĕр пуçне, çуркуннехи сунар – чун йăпатмăш çеç. Халĕ сĕтел çинче çăкăр çук тесе никам та пăшал çакса кайăк тытма каймасть. 1990 çулсенче сунарçăсем ĕççĕр юлчĕç те пăши е хир сысни тытса çемьене ашпа тивĕçтерчĕç. Ун пек вăхăт тахçанах иртнĕ. Кашни сунарçăн ĕç вырăнĕ пур е пенси илеççĕ. «Кайăк ашĕ çемьене тăрантма кирлĕ», – текенсене ĕненместĕп. Алтай тата Красноярск крайĕсенче, Калмăк Республикинче, Аçтăрхан облаçĕнче çуркуннехи сунар тапхăрне е пачах ирттермеççĕ, е кĕскетеççĕ. Çӳлерех çырнине тĕпе хурса Раççейре /Инçет Çурçĕр регионĕсемсĕр пуçне/ шыв-шур тата хырлăх кайăкне тытма сунар уçмашкăн чарма ыйтатпăр.

■ **Леонид ВОРОНОВ,**
**Раççей вĕçен кайăк-кĕшĕке хӳтĕлекенсен пĕрлĕхĕн республикăри уйрăмĕн ертӳçи**

Шăпа

# Чечек çыххи

...Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи пуçланнă чухне Николай Руссанов сержант Украина çĕрĕ çинче чикĕре тăнă. Хăрушă та ылханлă çапăçусен вутçулăмĕ тӳрех кунти пограничниксем çине тăкăнман пулсассăн та тепĕр темиçе кунранах вĕсен заставинчи салтаксен тан мар тытăçăва кĕме тивнĕ. Вăрçă пуçланнă-пуçланманах вилсе выртма куринчен те йывăртарах пулни çинчен çырма кирлех-ши?

«Гимнастерка кĕсйинче кашниннех хитре, йăлтăр кулăпа ялкăшакан хĕрсен сăн ӳкерчĕкĕсем пурччĕ, – аса илсе каласа панăччĕ мана хăй пурăннă чухне ветеран. Кунта эпĕ вулакана вăл фронтăн тертлĕ те асаплă çулĕ çинче мĕн курни-тӳсни çинчен çырса кăтартас тĕллев тытмастăп. Çакна çеç асăнса хăваратăп: Николай Руссанов аслă лейтенант, çапăçусенчи паттăрлăхпа хăюлăхшăн икĕ ордена тивĕçнĕскер, Çĕнтерӳ хыççăн тăван тăрăха тĕрĕс-тĕкелех çитнĕ те мирлĕ ĕçе кӳлĕннĕ. Тар шăрши çапнă шинельне хывсанах ĕнерхи салтак И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтне кĕнĕ, диплом илсен мĕн тивĕçлĕ канăва тухиччченех Йĕпреç районĕнчи тĕрлĕ шкулта ачасене истори вĕрентнĕ. Юлашки çулсенче вара Йĕпреçри иккĕмĕш вăтам шкул директорĕнче ĕçленĕ. Ăна «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ» хисеплĕ ят панă. Николай Руссанов – çамрăк ăрăва тарăн пĕлӳ тата тивĕçлĕ воспитани парас енĕпе çырнă нумай-нумай ĕçпе Чăваш кĕнеке издательстви кăларнă «Ача чунчĕрине тинкер...» кĕнеке авторĕ.

Пилĕк çул каялла вăл пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайрĕ. Çак йĕркесен авторĕ педагогика ĕçĕн ветеранĕпе тăтăшах тĕл пулса калаçнă. Николай Васильевич çав тери уçă кăмăллăччĕ, сăпайлăччĕ, вăрçăри пулăмсем çинчен сăмахлама юратмастчĕ. Çапах та, екки килнĕ вăхăтра, чунчĕринче тарăн йĕр хăварнă çулăмлă çулсене яш-кĕрĕм умне аса илӳсен хумĕ çинче «кăларса» хуратчĕ. Çавăн пек самантсенчен пĕринче тытма май килчĕ те ăна хăй ăсталанă тăпăл-тăпăл дача çумĕнче. Вăл каласа пани «Хыпар» вулаканĕсене те кăсăк пуласса шанатăп, унăн сăмахĕсене пĕр хитрелетмесĕр-эрешлемесĕр пĕтĕмпех илсе кăтартатăп...

Çĕнтерӳ кунне пирĕн взвод Чехословакин тĕп хулинче – Прагăра кĕтсе илчĕ. Совет салтакĕсене тав туса саламлама Ян Гус ячĕллĕ лапама халăх йышлăн пуçтарăннă. Концерт пуçланчĕ. Музыка училищин студенчĕсем юрласа пĕтерчĕç кăна – ман ума 5-6 çулсенчи хĕр ача сиксе тухрĕ. Аллинче – чечек çыххи. Ахăртнех, амăшĕ çĕнтерӳçĕсене парнелеме тыттарнăскер. Тепĕр самантран çав çыхă ман алăра пулчĕ. Эпĕ пĕчĕк чиперккене ытама илсе çӳлелле çĕклерĕм, питĕнчен чăпăрт! кăна чуп тума хăю çитертĕм. Çав хушăрах пирĕн çывăха хĕр ачан амăшĕ пырса тăнине сисмен те. Эпĕ унпа калаçу пуçларăм. Телее, чех хĕрарăмĕ вырăсла чухлаканскер пулчĕ. «Хĕрĕме Мария тесе чĕнеççĕ, хушамачĕ – Грушка. Ашшĕ Людвик Свобода ертсе пыракан бригадăра тăшмана хирĕç çапăçнă. Кĕçех киле таврăнмалла», – терĕ вăл кăмăллăн. Ăнсăртран пулса иртнĕ çак тĕл пулу тепĕр вунă çултан манăн ас тăвăмра «чĕрĕлесси», çакăн хыççăн эпĕ Прагăн тĕп урамĕнче мана чечек çыххи тыттарнă чех хĕрĕпе çырусем çӳретме пуçласси çинчен, паллах, шухăшламан та.

1954 çулта Чехословакин Мускаври Посольствин консул уйрăмне çыру ятăм, унта Прагăра пурăнакан Мария Грушкона шыраса тупма, унăн адресне пĕлтерме ыйтрăм. Мĕн тетĕр? Уйăх иртиччченех çитрĕ хурав. Посольствăра ĕçлекенсем тупса пачĕç мана чиперккене. 1968 çулччченех, асăннă çĕр-шывра пăтранулла лару-тăру пулса тăриччченех, çыру çӳретрĕмĕр унпа. Пăлхавçăсене пусарнă хыççăн пирĕн çыхăну татăлчĕ. Иртнĕ ĕмĕрĕн тăхăр вуннăмĕш çулĕсен пуçламăшĕнче каллех хут вĕççĕн «калаçма» тытăнтăмăр иксĕмĕр. Çак тапхăрта Мария Прага университечĕ çумĕнчи аспирантурăна пĕтерме те, «А.С.Пушкинăн «Евгений Онегин» сăвăллă романĕнчи çут çанталăка сăнласа пани» темăпа ăслăлăх диссертацийĕ çырма та, унтан, журналистикăна куçса «Руде Право» хаçатăн Австрири тата Италири ятарлă корреспонденчĕ пулма та ĕлкĕрнĕ иккен.

Эпĕ Марийăна тата унăн мăшăрне Клима Чăваш Ене килсе курма пĕр хутчен кăна мар чĕнсеттĕм. Мăшăрĕ Мускаври авиаци институтне пĕтернĕ мĕн, вырăсла таса калаçать. Шел, тĕрлĕ сăлтава пула чунтан кĕтнĕ тĕл пулу ытамĕнче савăнаймарăмăр...

Енчен те Николай Васильевич паян кунччченех ырă-сывă пурăннă тăк икĕ çемье хушшинче пуçланнă туслăх хăйĕн çулне хывма тытăннине курса пĕчĕк ача пекех виçесĕр хĕпĕртенĕ пулĕччĕ. Ашшĕн çурхи çеçке пекех илĕртӳллĕ «çунат» сарма пуçланă çутă ĕмĕтне Руссановăн хĕрĕ Маргарита пурнăçа кĕртрĕ-кĕртрех. Рита пилĕк çул каялла Итали каччипе Джанлука Паринипе мăшăрланнă. Вĕсем Миланра, тĕнчипе чапа тухнă «Ла Скала» опера театрĕ çывăхĕнче пурăнаççĕ. Бизнес тĕнчинче самаях ăнăçлă та шанчăклă утăм тăвать интернациллĕ çемье. Çакă вĕсене тĕнчери çĕр-шывсем тăрăх тăтăшах çула тухма та анлă майсем туса парать иккен. Нумаях пулмасть Паринисем Чехи çĕр-шывĕнче курса çӳренĕ, Рита ашшĕ пурăннă чухне хĕрне парса хăварнă адреспа Прагăри Страшница урамĕнчи 10-мĕш çурта çăмăллăнах шыраса тупнă. Паллах, пĕр-пĕрне нихăçан та курман, анчах тĕл пулнă-пулманах çур сăмахранах ăнланса илнĕ çемьесен хушшинче çавăн чухне мĕн таран ăш пиллĕ калаçу вырăн тупнине эпир çырса кăтартмасăрах вулакан чухлама тивĕç. Кĕрекере ларнă вăхăтра Грушкăпа Парини çемйисем чун-чĕресенче тарăн суран хăварнă манăçми вăрçă çулĕсене те, ун хыççăнхи йывăр, тертлĕ, çав хушăрах ырă шанăç çуратнă, политиксен шухăшламасăр тунă утăмĕсене пула тĕрлĕ халăх хушшинчи туслăхпа тăванлăх туйăмĕсем хавшама тытăннă тапхăра та ыратуллă, пăшăрханулла кăмăлпа аса илнĕ. «Пирĕн çемьесем пурнăç тĕрĕслевĕ витĕр шăранса та пиçĕхсе тухнă, çавăнпа та вĕсемшĕн умри нимĕнле йывăрлăх-чăрмав та хăрушă мар», – акă мĕнле пĕтĕмлетӳ тунă тĕл пулу вĕçĕнче икĕ çемье элчисем. Вĕсем çак тĕл пулушăн мĕн ĕмĕрĕ вĕçленичченех çунса та хыпăнса пурăннă Николай Васильевич Руссанов салтака тата вĕрентекене чун-чĕререн тав тунă, унăн таса та çутă сăнарне манăç тусанĕ витмесс шанса тăнине пĕлтернĕ.

■ **Геннадий КУЗНЕЦОВ**

Ас тăвăм

# Ял-йыш манмасть

***Совет халăхĕпе унăн Хĕç-пăшаллă Вăйĕсем нимĕç фашисчĕсене çапса аркатнăранпа кĕçех 70 çул çитет. Вăхăт темĕн чухлĕ иртсен те хаяр вăрçăн кунĕсем çынсен асĕнчен нихăçан та тухмĕç.***

Вăрçă пуçлансан тепĕр куннех Вăрмар районĕнчи Арапуç ялĕнче митинг ирттернĕ. Унта хутшăннисем хăйсен пурнăçне хĕрхенмесĕр тăшмана çапса аркатма хатĕрри, фронта мĕн вăй çитнĕ таран пулăшма пулни çинчен пĕлтернĕ. Ялти вăй питти 323 арçын алла хĕç-пăшал тытнă.

Хусанти вăрман хуçалăх техникумĕнчен вĕренсе тухнă Яков Николаевич Кудряшов çав вăхăтра Канашри вăрман хуçалăхĕн Энĕшпуçĕнчи уйрăмĕнче ĕçленĕ. 1942 çулхи юпа уйăхĕн 10-мĕшĕнче фронта каять. Малтанах Мускава лекет. Офицерсен курсĕнчен вĕренсе тухать. Юратнă мăшăрĕ Минадора Афанасьевна, фронтра çапăçакан ывăлĕ Геннадий тата тăванĕсем патне фронтран виç кĕтеслĕ çырусем ярсах тăнă. Вĕсем паян та йĕркеллĕ упранаççĕ. Хăшĕпĕринпе паллашар-ха.

**1943 çулхи çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕ.** «Ку çырăва Курск хулинчен çыратăп. Хаяр çапăçу пырать. Хальлĕхе сывах-ха. Ыран урăх çĕре тухса каятпăр».

Пирĕн ентеш Иккĕмĕш Украина фронтне лекет. Тăшманпа стрелоксен 10-мĕш рота командирĕ пулса хăюллăн çапăçать.

**Çĕртмен 16-мĕшĕ.** «Манăн ротăри икĕ салтак, йывăрлăха чăтаймасăр, чаçрен тухса тарчĕç. Таркăнсене хăваласа çитрĕмĕр. Çар трибуналĕ вĕсем пирки тивĕçлĕ йышăну тăвĕ. Совет çĕрĕшĕн юлашки юн тумламĕ юлмиччен çапăçакансен хушшинче çавăн пек яваплăха туйман йĕксĕксем пулмалла мар. Вĕсене пирĕн хушăра вырăн çук», – вĕçлет вăл çырăвне.

Иккĕмĕш Украина фрончĕн çарĕсем çĕнтерӳ хыççăн çĕнтерӳ туса малаллах талпăннă. Юпа уйăхĕн 25-мĕшĕнче Днепропетровск тата Днепродзержинск хулисене тăшманран ирĕке кăларнă.

**Чӳк уйăхĕн 14-мĕшĕ.** «Тăшман пирĕн çĕр çинчен хăй ирĕкĕпе тухас çук. Эпир унăн çарĕсене çĕмĕрсе тăкса хăваласа пыратпăр. Вĕсене тĕп тăвасси те нумай юлмарĕ».

1944 çулхи нарăсăн 14-мĕшĕнче Иккĕмĕш Украина фрончĕн çарĕсем Корсунь-Шевченко операцире тăшман çарĕн пысăк ушкăнне тĕп тунă. Часах Прут юхан шывĕн хĕррине – СССРпа Румыни чиккине тухнă.

**Ака уйăхĕн 20-мĕшĕ.** «Ку таранччен сывах-ха. Тăшмана хăваласа çĕмĕрсе пыратпăр. Украина, Бессараби урлă каçрăмăр. Халĕ Румыни çĕрĕ çинче çапăçатпăр. Помещиксем тухса тарса пĕтнĕ. Кунта халĕ хамăр хуçа».

Кăштахран Арапуçĕнчи Кудряшовсем тепĕр çыру илеççĕ.

**Çу уйăхĕн 26-мĕшĕ.** «Майăн 10-мĕшĕнче каçхи 11 сехетре мана сылтăм аларан амантрĕç. 22-мĕшĕччен госпитальте сывалтăм. Алă тӳрленсе çитрĕ. Строя тăтăм. Кĕçех çапăçăва кĕретĕп».

**Утă уйăхĕн 24-мĕшĕ.** «Ирхине ирех хамăн ротăпа палăртнă вырăна çитсе тăтăм. Ман пата килме хатĕрленсе тăракан хамăр ял çыннине Яков Никитина курах кайрăм. Кĕтмен тĕл пулу. Халĕ ĕнтĕ вăл манăн ротăра, пĕрле пурăнатпăр».

Çурлан 25-29-мĕшĕсенче малта пыракан пирĕн çарсем Румынин Плоешти хулинчен кăнтăр еннерех наступлени пуçланă. Я.Кудряшов ротинчи салтаксем тăшманпа паттăррăн çапăçнă. 1944 çулхи авăнăн 1-мĕшĕнче ентешĕн награда хутĕнче гварди стрелоксен 10 полкĕн командирĕ К.Мустафа подполковник çапла çырнă: «Я.Н.Кудряшов нимĕç фашисчĕсене хирĕç хăюллăн та паттăррăн çапăçнипе, ротăна пултаруллăн ертсе пынипе палăрса тăрать. Вăрçăри кăткăс лару-тăрура 1944 çулхи çурлан 20-мĕшĕнче унăн роти Яссы хули çывăхĕнчи тăшманăн çирĕп оборонине аркатса тăкса румынсен 100 яхăн салтакĕпе офицерне тĕп тунă. 250 мм 4 пушкăна туртса, Румынин 155 салтакне тыткăна илнĕ. Пулемет расчечĕ стройран тухсан Кудряшов хăй унран пеме пуçланă. 40 яхăн румынпа нимĕç салтакне леш тĕнчене ăсатнă. Унăн салтакĕсем Плоешти хулин хĕвел анăç енчи нимĕçсен оборонине татнă. Рота зенитлă 1 батарейăна, юсавлă 14 автомашинăна, 40 яхăн лавран тăракан обоза, 18 гитлеровеца тытса илнĕ. Пултаруллă командир ертсе пынипе рота çурла уйăхĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа 31-мĕшĕччен хаяр çапăçусенче тăшмана 450 километр каялла чакарнă. Вăл Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ илме тивĕçлĕ».

**Авăн уйăхĕн 20-мĕшĕ.** «Çурла уйăхĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа авăн уйăхĕн 16-мĕшĕччен пĕр канмасăр тăшмана çĕмĕрсе Румыни çĕрĕ тăрăх Карпат сăрчĕсем урлă Венгри чикки патне çитсе тăтăмăр. Кунта кашни минутра тем те сиксе тухма пултарать. Халĕ Венгри чиккинчи Дурты хули патĕнче çапăçатпăр. Тăшман хăйĕн çулĕпе тарма пуçларĕ. Канма памасăр хăвалатпăр. Эпир Якăппа ирхине 10 сехетре уйрăлтăмăр. Юнашар утса пынă чухне Якăпа пĕçĕрен амантрĕç. Икĕ красноармеецпа ăна санитарсем патне илсе çитертĕмĕр. Мана командовани орденпа наградăлама тăратрĕ. Эпĕ киле таврăнас пулсан манăн кăкăр çинче орден çиçсе тăрĕ. Телей пулсан таврăнăп-ха. Вăрçă вĕçленесси кĕскелсе пырать. Юратнă Минадора! Раштав тĕлне киле çитетĕп те пулĕ, кĕтĕр!»

Я.Кудряшовăн юлашки çырăвĕ пулнă вăл. РФ Оборона министерствин Подольскри тĕп архивĕнчен панă документран çакă паллă. Вăрçă хирĕнче хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн 1944 çулхи авăн уйăхĕн 17-мĕшĕнчи Я.Кудряшова 0137 номерлĕ Хĕрлĕ Çăлтăр орденпа наградăланă.

Шел, вăрçă паттăрĕ çав ордена алла илеймест. Часах киле хурлăхлă çыру килет. «Гварди аслă лейтенант Кудряшов Яков Николаевич Тăван çĕр-шывшăн пынă хаяр çапăçура хăюлăхпа паттăрлăх кăтартса, çар присягине чыслăн пурнăçласа 1944 çулхи авăн уйăхĕн 25-мĕшĕнче йывăр аманнă хыççăн паттăрсен вилĕмĕпе вилет. Ăна Румынин Дурты хулинчен 22 çухрăм хĕвел анăçнелле Борзешты ял çывăхĕнче пытарнă».

Арапуççенчен фронтран тăван киле 233 çын таврăнайман, ял-йыш вĕсене асра тытать, паттăрлăхĕпе тивĕçлипе мухтанать.

■ **Анатолий ХОВАНСКИЙ.**
Вăрмар районĕ

